**Тавах сире, учительсем!**

Ытарайми çыннăмăрсем,
Асран кайми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мĕн ачаран ăс панишĕн,
Анне пекех юратнишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Нихçан манми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Çăпай пулма вĕрентнишĕн,
Ĕçчен пулма хал панишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Пире саван учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мăшăр çунат пилленишĕн,
Çӳл тӳпене çĕкленишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

*Давыдов-Анатри, В. Тавах сире, учительсем! / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 259.*